# ЧИПЕР АННА

...Вăл ыттисенчен чылай маларах утса тухса тăчĕ те, тараннăн сывласа илсе, хăйĕн уçă та вăйлă сассипе юрласа ячĕ:

**Атăл тулать, хумĕ вылять,**
**Юрату евĕр йăлтăртатса.**
**Чун савăнать, горлас килет,**
**Ырă та кăмăллă, тусăм,**
**Эс хытă савсан...**

Унтан ку юрра сцена çинче таракан пĕтĕм хор хутшăнса юрла пуçларĕ. Юрă хăватлăн та илемлĕн янăрарĕ, çынсен чĕрисене пырса тивсе весен кăмăлĕсене çĕклерĕ, хавхалантарчĕ...

Çав вăхăтра халăх хушшинче ларакан пĕр каччăн хăмăр куçĕсем, маларах тăрса юрлакан хĕрсенчен пĕрин çине тĕлле-се, шăтарас пек пăхрĕç.

Юрланă чух хĕрĕн шап-шурă тикĕс шăлĕсем курăнаççĕ. Хура хурлăхан пек куçĕсем йăвашшăн кулса пăхаççĕ. Питĕ илемлĕ вăл... Куçхаршийĕсем çĕнĕ уйăх пек авăнчăк. Тикĕс те тӳрĕ, шĕвĕртерех вĕçлĕ сăмси çумĕнче хура пăнчă пек.

курӑнакан турпалли те килӗшӳллӗ. Пичӗ кӑшт тӑрӑхларах та шап-шурӑ, таса. Хӑй ҫинче унӑн шупка кӗрен пурҫӑн кӗпе. Умне сенкер сапун ҫакнӑ. Шурӑ тутӑр айӗнчен якатса туранӑ ҫӳҫтунисем витӗр курӑнаҫҫӗ. Тулли кӑкӑрӗсем ҫинче икӗ ярӑм ҫутӑ шӑрҫа йӑлтӑртатать.

— Кун пек чипер хӗре куҫран вӗҫертес марччӗ,—теҫҫӗ каччӑ куҫӗсем.

Чӑнах та, вӑл ӑна ҫухатмарӗ. Юнашар ларакан пӗр каччӑран ҫав хӗр хӑш ялсем, мӗн ятлӑ иккенне ыйтса пӗлчӗ...

— Салам... Эс мана пӗлместӗн, анчах эп сана паллатӑп. Эсӗ Кӗтмелсем, сана Анна тесе чӗнеҫҫӗ. Пӗлетӗн-и, эпӗ сана виҫӗ ҫул шырарӑм,—терӗ каччӑ концерт хыҫҫӑн, хӗр умне сасартӑк пырса тӑрса.

Анна ун ҫине тӗлӗнсе пӑхрӗ. Ун умӗнче хӗвелпе пиҫсе хуралнӑ вӑтам пӳллӗ каччӑ йӑл кулса тӑрать. Куҫӗсем йӑлтӑртатса ӑшшӑн пӑхаҫҫӗ. Кулнӑ чух питҫӑмартийӗсем ҫинче пӗчӗк ҫеҫ путӑксем палӑраҫҫӗ. Хура ҫӳҫне хыҫалалла тураса янӑ. Кӑвак костюмпа, шурӑ квпепе, симӗс галстукпа...

— Эсӗ тӗлӗнетӗн пулас?.. Эпӗ Кируш ятлӑ, манса каймастӑн-и ман ята?

— Ҫук, манмастӑп,—терӗ Анна, ним калама пӗлмесӗр.

— Эсӗ пит лайӑх юрларӑн...

— Эп... пӗччен мар вӗт. Пирӗн колхоз хорӗ ҫапла юрлать...

— Ҫук, чи лайӑх юрлаканни—эсӗ... Манӑн санпа ҫывӑхрах паллашас килет.

Анна ӑна хирӗҫ нимӗн те каламарӗ. Паллашнӑшӑн мӗн пултӑр вара? Каччӑсемпе хӗрсем уявсенче паллашни—ӗмӗртен пыракан йӑла, уншӑн никам та тиркешмест...

Кӑштах калаҫкаласа тӑрсан Кируш Аннана каруҫҫелпе ҫаврӑнма чӗнчӗ. Вӗсем юнашар ларса ҫаврӑнчӗҫ. Чипер хӗрпе чипер каччӑ ҫине ҫынсем ырӑ кӑмӑлпа пӑхрӗҫ. Ун хыҫҫӑн каччӑпа хӗр калле-малле уткаласа ҫӳрерӗҫ. Юрӑ праҫникӗ салана пуҫласан тин Анна киле кайма вӑхӑт ҫитни ҫинчен каларӗ. Анчах Кируш уйрӑлса юласшӑн пулмарӗ, Аннана вӑл хӑйсен ялне ҫитиччен ӑсатма пычӗ.

Çавăнтан вара Аннапа Кируш хушшинче туслăх пуçланса кайрĕ. Кируш час-часах Кĕтмеле çӳреме тытăнчĕ.

...Анна ача чухне вĕсем патĕнче ялти ватăрах учительница хваттерте пурăннă. Аннасен йышĕ пĕчĕк пулнă, вĕсем виççĕн çеç пурăннă: ашшĕ, амăшĕ, Анна. Анчах Анна тăххăрта чух унăн амăшĕ ăнсăртран вилсе кайнă. Вара Аннашăн вĕсем патĕнче пурăнакан учительница чи çывăх та юратнă тăван çын пекех пулса тăнă. Унран вăл хутла çеç мар, çĕвĕ çĕлеме те, тĕрĕ тĕрлеме те, темĕн тĕрлĕ пахча çимĕç ӳстерме те вĕренсе юлнă. Кайран, учительница пеней çине тухса, хăйĕн инçетри тăванĕсем патне пурăнма куçса кайсан та, Анна ăна пĕрмай çавăншăн тав тунă...

Мĕн пĕчĕкренпех тасалăха хăнăхса ӳснĕ май, Анна ялан лайăххрах та илемлĕрех тумланса çӳреме юратнă. Тен, çавăнпах-и ялта ăна «Чипер Анна» тесе чĕнме пуçланă.

Халь ĕнтĕ Анна ӳссе çитнĕ хĕр. Ун çине нумай каччăсем куç хывса пурăнаççĕ. Акă Кируш та юратса пăрахрĕ пулмалла ăна... Анчах хура керкунне çитсен Аннапа Кирушăн пĕр-пĕринчен нумайлăха уйрăлмалла пулчĕ. Кируша Совет Çарне илчĕç. Вăл килтен тухса кайичченех Аннапа хут уйăрасшăн пулчĕ. Çакăн пек хитре хĕр хăйне кĕтсе пурăнасса шанмарĕ пулас çав çамрăк чун. Виçĕ çул хушшинче такам та тупăнма пултарать!.. Анчах Анна ăна: шанчăк хут çинче мар, чĕрере пулмалла, тесе лăплантарчĕ.

Анна ашшĕ, питĕ лăпкă та сăпайлă çын, граждан вăрçин инваличĕ, сад ĕçне юратнă. Çăвĕпех кăштăртатнă вăл колхоз садĕнче, пĕтĕм вăйне парса ĕçленĕ.

Халĕ Анна та садра ĕçлет. Юлашки çулсенче колхоз сачĕ çав тери ӳссе, аслăланса, палламалла мар пулса кайрĕ. Елĕк ним усăсăр, çап-çара выртнă çырма-çатрасенче темĕн тĕрлĕ çырла-улма йывăççисем ешĕреççĕ. Икĕ колхоз пĕрлешсен Анаткаспа Кĕтмел сачĕсене пĕрлештересси çинчен сăмах хускатрĕ. Ку ĕçе юнашар колхозăн, халĕ ĕнтĕ иккĕмĕш бригадăн садовочĕ Илья Васильевич Викторов пуçарса ячĕ.

— Садсен уссине пурте кураççĕ ĕнтĕ халь,—терĕ вăл правленинче пулнă садоводсен канашлăвĕнче,— çавăнпа

хамăрăн садсене тата пысăклатса пырассине хирĕç никам та пулас çук. Мĕнле ăслă çын лайăх япалана хирĕç пултăр? Тырпул акма юрăхсăр, çырма-çатраллă е сăртлă вырăнсем тшрĕн сахал мар-ха. Çав вырăнсенче пур çĕрте те садсем тумалла. Паллах, ку ĕç çăмăлах мар, анчах пирĕн опыт пур ĕнтĕ...

Унтан Илья Васильевич садсене ăçта-ăçта ĕрчетесси, хăш тĕле мĕнле йывăçсем—ăçта ир пулакан сортсем, ăçта каярах юлса пулакан сортсем лартмалли çинчен, хамăр енчи йывăçсене кăна мар, ытти вырăнсенчи сортсене те ӳстерме кирли çинчен каларĕ. Сăмахпа çеç каламарĕ вăл, пысăк хут çине хăех тĕрлĕ сăрсемпе сăрласа тунă план çине кăтартса Знлантарчĕ. Питĕ хĕрӳллĕ, ĕнентерӳллĕ пулчĕ унăн сăмахĕ...

Илья Васильевич каланисемпе пурте пĕр кăмăллă пулсах килĕшрĕç. Колхоз председателе те ырларĕ унăн сĕнĕвĕсене, садоводсене малашне пур енчен те пулăшса пыма пулчĕ.

— Питĕ ăслă çын иккен ку...—шухăшларĕ Анна Илья Васильевич çинчен.—Арăмĕ телейлĕ ĕнтĕ унăн...

Каярахпа çакна пĕлчĕ Анна: сад ĕçне Илья Васильевич ачаранах хăнăхса çитнĕ. Ĕлĕк весен хăйсен те пысăк сад пулнă. Анчах вăрçă вăхăтĕнче, Илья Васильевич фронтра чух, вĕсен сачĕ вăйлă сивĕсемпе шăнса пĕтнĕ. Çавăн пирки вăл пуçарса янă колхоз сачĕ те япăха тухнă. Колхоз ăна малалла аталантарма мар, мĕн пуррине те сыхласа хăварайман.

— Пĕтĕмпех çĕнĕрен пуçламалла,—тенĕ вара Илья Васильевич, вăрçăран таврăнсан.

Вăл Совет Çарĕнче партине кĕнĕ. Çапăçусенче виçĕ хут та аманнă. Тепĕр чух, çанталăк пăсăлас умĕн, çав суран вырăнĕсем унăн халĕ те ыратаççĕ.

Малтанах çынсем ăна колхоз председателе тăвасшан пулнă, анчах кунпа хăй килĕшмен.

— Урăх ĕç парăр мана. Эсир шансан, эпĕ колхоза асăималăх сад ӳстерсе парăп,—тенĕ вăл.

— Чуну ăсталла туртать, çавăнта ĕçле эппин,—килĕшнс холхозниксем.

Çавăнтан вара пĕтĕм чун-чĕрине сада парса ĕçленĕ Илья Васильевич. Хăй пахчинче те вăл çĕнĕ сад лартса ӳстернĕ, тĕрлĕрен опытсем тунă. Анăçлă иртнĕ опытсемпе вара колхоз садĕнче усă курнă.

Темиçе султан садра вуншар йышши шултра та тутлă панулмисем пула пуçланă, хулари пасара колхоз çăвĕпех çырла турттарнă. Çакă вара Илья Васильевича хăйне кăна мар, пĕтĕм колхозниксене савăнтарнă. Пĕр виçĕ çул каялла садра пысăк питомник тунă, таврари колхозсене лайăх йышши улма-çырла йывăççисем хунавĕсене туянтара пуçланă-

* * *

Ноябрь пуçламăшĕнче пĕтĕм тавралăх хулăн пĕркенчĕкпе витĕнчĕ, шап-шурă юр айне пулчĕ. Юр тăтăшах çурĕ, вăл çырма-çатрасене, лакăм-тĕкĕмсене тикĕслерĕ...

Садра хĕлле те ĕç çителĕклĕ. Виçĕ кун çавăрттарнă çилтăман хыççăн Илья Васильевич шап-шурă юр çине йĕр туса колхоз садне кĕчĕ. Ун хыççăн Аннапа унăн хĕр-тантăшĕсем шавласа утрĕç. Таврара çав тери илемлĕ... Çĕнĕ юр хĕвел çутинче куçа йăмăхтармалла йăлтăртатать. Улмуççисем юр айĕнче çывăрнă пек лăпкăн, йĕркипе лараççĕ.

Илья Васильевич бригадăна уй хĕрне илсе тухрĕ.

— Çакăнтан пуçлăпăр. Кунта сивĕрех пулать, тата мулкачăсем те малтарахран çитеççĕ...

Хĕрсем çемçе те кăпăшка юра улмуççисем çумне купалама тытăнчĕç. Кăшт ĕçлесен нумайăшĕсем, ăшă пулнипе, тумтирĕсене те хывса хучĕç.

— Ыран леш енчи çамрăк улмуççисене улăмпа, чăрăш турачĕсемпе чĕркесе çыхăпăр. Кĕреçесем те кирлĕ пулаççĕ, хыççăн купаласа хăварăпăр,—терĕ Илья Васильевич кăнтăрла иртсен, çынсем киле саланас умĕн.

Çула май Анна хăйĕн ашшĕ патне садри хурал пӳртне кĕрсе тухма шут турĕ. Хурал пӳрчĕ чылай инçетре, сăрт

айӗнче ларать. Урамран ҫаврӑнса кӗриччен, Анна тарӑн юр тӑрӑх ашса тӳрех кайрӗ.

Пӳрт алӑкне уҫса кӗрсен, вӑл ҫунакан тимӗр кӑмака умӗнче икӗ пӗчӗк ача ларнине курчӗ. Анна ашшӗ вӗсене томах каласа парать.

— Мӗнле халӑх сан кунта, атте?—тӗлӗнсе ыйтрӗ Анна.

— Илья Васильевичӑн чӗпписем вӗсем. Шутсӑр маттур зчасем...—терӗ Анна ашшӗ, пӗр ачине ҫурӑмӗнчен лӑпкаса илсе.

— Мӗнле майпа килнӗ тата вӗсем кунта?

— Ашшӗ хӑйпе пӗрлех илсе килчӗ. Вут хутса кӑларма ӗлкӗреймерӗм, сивӗ пӳрте пӑрахса хӑварас килмерӗ, тет. **Са**ва ӗнтӗ, амӑшӗ ҫук та весен—кансӗр...

Анна нумаях пулмасть Илья Васильевич арӑмӗ ӳпке шыҫҫипе вилни ҫинчен илтнӗччӗ ҫав. Анчах илтнӗ те манна. Халӗ акӑ унӑн ҫак тӑлӑх ачасене ҫав тери шеллес килсе кайрӗ.

Кӑшт тӑхтасан Илья Васильевич хӑй те хурал пӳртне пырса кӗчӗ. Ачисене киле кайма васкатрӗ вӑл. Анна вӗсене тумланма та пулӑшрӗ. Урама тухиччен пӗчӗкреххине йӑтса пырса ӑсатса ячӗ.

...Унтанпа чылай вӑхӑт иртрӗ. Сивӗ хӗл хыҫҫӑн уяр ҫуркунне ҫитрӗ. Шыв-шурсем типсе пынӑ май урамсем, улӑхсемпе сӑртсем симӗс кавирпе витӗнчӗҫ. Садра та пурнӑҫ чӗрӗлчӗ. Улмуҫҫисем, ҫырла йывӑҫҫисем мамӑк пек шурӑ чечексемпе капӑрланчӗҫ. Вӗсенчен ытармалла мар тутлӑ шӑршӑ кӗрет. Садра вӗҫен кайӑксем чӗвӗлтетеҫҫӗ, ир-каҫ шӑпчӑксем хӑйсен вӗҫӗмсӗр юррисене шӑрантараҫҫӗ...

Анчах ҫанталӑк ялан пӗр пек пулмасть ӗнтӗ. Пӗррехинче кунӗпех хӗвел хӗртсе пӑхрӗ. Каҫалапа вара хӗвеланӑҫ енчен тачка пӗлӗтсем купаланса тухрӗҫ, ҫил чарусӑр вӗрме пуҫларӗ. Часах ҫиҫӗм ҫиҫрӗ те аслати кӗрлесе ячӗ, пӑрлӑ ҫумӑр ҫума тытӑнчӗ.

Садра ӗҫлекен хӗрсем хурал пӳрчӗ ҫумӗнчи сарайне пухӑнчӗҫ. Вӗсемпе пӗрле Илья Васильевич **та** чупса кӗчӗ. Ан-

чах вал, çамрак иываçсем сиенленсе юласран хараса, çилтăвăла пĕччен çĕнтерес пек, каллех садалла тухса чупрĕ, Анна çав вăхăтра шăпах кунта пулнă Илья Васильевич; ачисене йăпатса, лăплантарса тăчĕ.

Юрать-ха, çил-тăвăл нумая пымарĕ, Атăл еннелле шавласа иртсе кайрĕ. Ун хыççăн каллех хĕвел тухрĕ, йĕпенсе лутăрканса юлнă сад пахчине ăшăтса çутатрĕ.

Анна каллех бригадăна сада ертсе тухрĕ. Илья Васильевич сиенленнĕ çырла курăкĕсене халех тӳрлетсе тухма хушрĕ.

Шăп çав вăхăтра, кĕтмен çĕртен, анат енчен килекен сукмак тăрăх салтак тумтирĕ тăхăннă кĕрнеклĕ çын утса тухрĕ.

— Кируш!—палласа илчĕ Анна.—Хăçан килнĕ эсĕ?

Ытти хĕрсем те салтака сăрса илчĕç. Аçта, мĕнле пурăнни çинчен ыйтса пĕлме тытăнчĕç. Кируш пуринпе те савăнăçлă, кăмăллă калаçрĕ... Унтан вăл Аннана садран тухма чĕнчĕ. Анна, ăнсăртран пек, Илья Васильевич çине пăхса илчĕ, унăн куçĕсем çав тери салхуллăн пăхнине асăрхарĕ вăл. Çав самантрах темшĕн, унăн хăйĕн те кăмăл хуçăлнă пек пулчĕ...

Анчах Кирушпа инçетех каймарĕ вăл, сад хапхи патне çеç çитрĕ.

— Хĕрсенчен аван мар,—терĕ Анна,—вĕсем ĕçлеççĕ,. эп—кунта...

Кируш пуçĕпех таврăнса килнĕ иккен. Аçта пит васкасха ĕнтĕ? Малта вăхăт нумай!

Кируш Анна патне çырусем пĕрмаях çырнă, кашнинчех хăй ăна юратни çинчен каланă, «сана курса чуптăвас ĕмĕтпе çеç пурăнатăп», тенĕ. Анна та унăн пĕр çыруне те ответсăр хăварман, анчах вăл пуринчен ытларах колхозри ĕçсем çинчен пĕлтернс. Кируш служби виççĕмĕш çул çине кайсан. вăл хăй ирĕкĕпе çарта тепĕр çуллăха юлатăп, тесе пĕлтернĕ. Анна ăна хирĕç: «Хăвăнне ху пĕл», тенĕ. Шутпа, Кируш кăçал кĕркунне таврăнмаллаччĕ ĕнтĕ, анчах çу варринчех килсе çитрĕ. Мĕншĕн ун пек пулни çинчен Анна ыйтас темерĕ, ун çинчен вăл чылай кайран пĕлчĕ...

Эрнерен вĕсем хут уйăрчĕç. Кируш васкасах авланасшăн пулчĕ. Анна та хирĕçсех тăмарĕ. Ашшĕ те чармарĕ ăна: хĕрĕ хăй килĕштерсе качча тухать пулсан—пўрни çавăнта пулĕ,—терĕ вăл.

...Тепĕр уйăхран вара туй пулчĕ.

*

Аннан çĕнĕ çĕрте çĕнĕ пурнăç пуçланчĕ. Ют ялта, ют кил-çуртра пулин те, савнă упăшкапа пурпĕрех пурнăç илеммĕ. Ĕçсĕр пурăнма вĕренменскер, вăл кунта та ахаль лармарĕ, туй хыççăн ик-виç кунтанах хĕрарăмсемпе пĕрле колхозра ĕçлеме тытăнчĕ.

Анчах Кируш ĕçе тытăнма васкамарĕ. Вăл мĕнле те пулин лайăхрах вырăна кĕресси çинчен ĕмĕтленсе пурăнчĕ.

— Çартан таврăннă çынна лайăх ĕç тупса пама тивĕç,—терĕ вăл.

Чăнах та, пĕррехинче колхоз председателе вĕсем патне киле пырсах унпа калаçрĕ. Вăл Кируша транспорт бригадин бригадире пулма сĕнчĕ. Анчах Кируш унпа килĕшмерĕ.

— Эпĕ мĕн тума сакăр çул вĕреннĕ? Çарта та отлично вĕренсе пынă, ялан благодарность илнĕ... Пысăкрах ĕçре пулма тивĕç эпĕ,—терĕ вăл пирус туртнă май ункăн-ункăн тĕтĕм кăларса.

— Юрĕ эппин, тăхтар... Кĕркунне ак пирĕн счетовод бухгалтерсен курсне вĕренме каять. Ун вырăнне çын кирлĕ пулать,—терĕ председатель.

Çавăнпа Кируш каллех кĕтсе пурăнма тытăнчĕ.

Пĕрре Анна ăна ирех вăратрĕ:

— Утă капанĕсем хыватпăр паян, пулăшма пыратăн пулĕ, арçын сахал пирĕн,—терĕ.

Кируш мăшлаткаласа илчĕ те стена еннелле çаврăнса выртрĕ.

— Ма вăрататăн чипер çывăракан çынна? Асту, унсăр утă капанĕсем хываймĕç?!—терĕ Кируш амăшĕ, кăмăлсăрланса.

— Эпир Кируша яланах тăраниччен çывăратса пурăннă. Халĕ, çартан килнĕскере, ытларах кантармалла. Пайтах тертленнĕ пуль-ха лере... Ун вырăнне хăвăн ытларах ĕçлес пулать!—шăл витĕр сăрхăнтарса илчĕ Кирушăн качча кайман ватă аппăшĕ.

Анна вĕсене хирĕç пĕр сăмах та чĕнмерĕ. Анчах хăйне кунта ним вырăнне те хурасшăн пулманнине ăнланса илчĕ вăл. Çара кайса килнĕ çын кун пек пуласса вăл нихçан та шухăшламан. Çывăрса тăрсан çур сехет хушши çăвăнать. Унтан кашни тăхăнмалли япалине силлесе тумланма тытăнать. Кайран тĕкĕр умĕнче çӳçне пĕрре апла, тепре капла тураса тăрать. Вăл çапла аппаланнă вăхăтра амăшĕ ун валли çимелли хатĕрлет. Ана яланах ыттисенчен тутлăрах çитерме тăрăшать вăл.

Анна хăйĕн упăшкине чылайранпа пĕлнĕ пулин те, вăл килĕнче кун пек хăтланнине пĕлмен. Темле, хăй сисмесĕрех, Анна ăна Илья Васильевичпа танлаштарма тытăнчĕ. Лешĕ те арçын. Çапах та, ачи-пăчи мĕнĕпех пĕччен пурăнать пулин те, пур ĕçсене те туса çитерме ĕлкĕрет. Темшĕн унăн салхуллăрах куçĕсем час-часах Анна куçĕ умне тухса тăраççĕ.

— Çапла çав... çынпа çын пĕр пек пулмасть. Пурăнакиле Кируш та улшăнĕ-ха,—çапла лăплантарма тăрăшрĕ хăйне хăй Анна.

Пĕррехинче хăйсен пускил арăмĕ Аннана ытла та тĕлĕнмелле сăмах каларĕ:

— Эсĕ нимĕн те илтмен-и, çĕнĕ çын? Сăна-ха лайăхрах, санăн упăшку леш енчи хусах Варвари патĕнче час-часах пулать, теççĕ... Варварийĕ çавăн пекскер вăл...

— Ан калаç кирлĕ мара! Манăн упăшка ун пек çын мар,—терĕ Анна ăна хирĕç, анчах хăйĕн чĕри çав тери ыратса илчĕ. Ку таранччен Кируша хăй пекех таса чун-чĕреллĕ çын тесе шутланă-çке вăл. Çук, пулма пултараймасть!..

...Анчах каярахпа ку сăмаха пурпĕрех аса илме тиврĕ унăн. Лапра кĕркунне пулса иртрĕ ку...

Хӗвел пачах та сӳннӗ пек, пӗрре те курӑнмасть. Тӳпере пӗр вӗҫӗмех хулӑн пӗлӗтсем шуса иртеҫҫӗ. Ҫанталӑк сулхӑн та тӗксӗм тӑрать. Час-часах вӗтӗ ҫумӑр пӗрӗхе-пӗрӗхе илет.

Аннапа Кируш аппӑшӗ колхоз лашипе станцие ҫитсе тӑчӗҫ. Аппӑшӗн Шупашкара больницӑна каймалла пулнӑ— юлашки вӑхӑтра шав пуҫ ыратнипе аптранӑ вӑл. Анна ӑна леҫме пынӑ.

Аппӑшне билет илсе парса поезд ҫине лартсанах, Анна хӳмерен кӑкарнӑ лаши патне пычӗ те киле кайма хатӗрленчӗ. Ҫав вӑхӑтрах вӑл сасартӑк темле хӗрарӑм: «Гражданка!» тесе чӗннине илтрӗ. Анна ҫаврӑнса пӑхрӗ. Ун патне вырӑсла тумланнӑ хӗрарӑм пырса тӑчӗ: шыв яман плащ тӑхӑннӑ, пуҫӗнче кӑвак шлепке, ун айӗнчен кӑтра сарӑ ҫӳҫ курӑнать. Вӑл Анна ҫине ӗшеннӗ куҫӗсемпе пӑхрӗ те:

— Эсир, ӑнсӑртран, Кӗтмел ял Советнелле каймастӑр-и?—тесе ыйтрӗ.

— Шӑпах ҫавӑнта каятӑп,—терӗ Анна.

— Апла пулсан, мана лартса каймӑр-ши?

— Лартса кайма пулать. Эпӗ пӗчченех каятӑп.

— Анчах эпӗ хам пӗччен мар-ха. Алӑри ача пур манӑн. Кӑштах кӗтсе тӑмӑр-ши? Ачасен пӳлӗмӗнче вӑл, эп ӑна халех илсе тухатӑп...

— Калаҫса татӑлтӑмӑр пулсан, кӗтетӗп ӗнтӗ.

Хӗрарӑм чӑнах та нумай кӗттермерӗ. Вӑл станци алӑкӗнчен алӑри ачапа тухнине Анна катаранах курчӗ. Ун хыҫҫӑн носильщик унӑн япалисене—пӗр чемодан, темле пысӑк ҫыхӑ йӑтса утрӗ.

Пурте вырнаҫса ларсан, Анна тилхеперен карт, туртрӗ те, лаша вырӑнтанах чупма тытӑнчӗ, ҫӑмӑл тӑрантас вӗттӗн кӑлтӑртатса кусма пуҫларӗ.

«Шкула ҫӗнӗ учительница килмелле терӗҫ, ҫавӑ пулас ӗнтӗ ку»,—шухӑшларӗ Анна. Ҫавӑнтах хӑй:

— Эсир инҫетрисем-и?—тесе ыйтрӗ.

— Инҫетрен. Белоруссинчен эпӗ,—терӗ хӗрарӑм. Унтан йӗри-тавралла пӑхса:—Илемлӗ сирӗн кунта. Вӑрманӗ те,

шывĕ те пур... Ялĕсем те вăрманта ларнă пекех, йывăçлă,— тесе хушса хучĕ.

— Çапла, хурламалла мар пирĕн кунта,—килĕшрĕ Анна.

Сăмах хыççăн сăмах. Ют хĕрарăм калаçма юратаканскер пулчĕ, вăл хăйсен çĕршывĕ çинчен каласа пачĕ. Анна чăваш çĕршывĕ çинчен калакаларĕ.

Тепрер сехетрен Кĕтмел ялĕ курăнса кайрĕ.

— Акă ĕнтĕ, çитетпĕр те. Сире шкула леçсе хăвармалла пуль?—ыйтрĕ Анна хĕрарăмран.

— Мĕн тума шкула? Манăн унта ĕçĕм çук. Эсир мана такампа пăтраштаратăр пулас...

— Эсир учительница мар-и вара?

— Çук. Эпĕ ку яла хам упăшка патне килетĕп... Эсир ăна пĕлетĕр те пулĕ-ха: Макаров хушаматлă вăл.

— Макаров? Мĕнле Макаров?—тăрук хăраса кайса,. улшăннă сасăпа ыйтрĕ Анна.

— Кирилл Макарович. Ма ун пекех тĕлĕнсе пăхатăр?" Ана мĕн те пулин пулман пуле те?..—Ачаллă хĕрарăм кусесене мăч-мăч-мăч тутарса илчĕ.

— Çук... Нимĕн те пулман, сывах вăл,—терĕ Анна хуллен. Унăн сасси çĕтсех ларчĕ. Вăл лашана хытăрах хăвала пуçларĕ, хăй тепĕр еннелле пăхрĕ.

— Калăр-ха, мĕнлерех пурăнать вăл? Юлашки вăхăтра темшĕн çырусем пит сайра çырчĕ...

— Аван пурăнать пулас,—аран çăвар уçрĕ Анна.

Унăн сывлăшĕ пӳлĕнсе ларчĕ. Пĕр хушă вăл нимĕн илтми, нимĕн ăнланайми пулчĕ. Çак самантра вăл Белоруссинчен килекен ют хĕрарăма çав тери курайми пулса тăчĕ.

— Аçтан вăл ман тĕлех пулчĕ-ха тата? Пăх-халĕ, чиперех лартса каятăп вĕт...

Кĕтмен çĕртен сар çӳçлĕ хĕрарăмăн ачи шариех кăшкăрса макăрса ячĕ. Амăшĕ ăна тем каласа лăпкама тытăнчĕ.

«Ачине, чăнах, шел вара... Мĕн пĕлет, мĕн чухлать вăл? Çылăхсăр чун... Тата... ку хĕрарăм та айăплă мар-тăр. Пĕтĕмпех Кируш айăплă! Вăл ĕнтĕ ăна та мана каланă сăмахсенех каланă: юрататăп, сансăр пурăнма пултараймастăп,

ĕмĕр пĕрле пулăпăр тенĕ... Тем тĕрлĕ те мухтаннă пулĕ-ха тата, намăссăр... Халĕ мĕн ĕнтĕ? Мĕн тумалла манăн? Вĕсем—çемье, ачаллă та пулнă... Эпĕ кам? Никам та мар. Мĕншĕн çаплах мăшкăлларĕ вăл мана? Пĕр-пĕрин патне икĕ çул хушши çыру çырса пурăнтăмăр... Эпĕ шаннă ăна, вăл мана улталарĕ. Çав тери намăссăр улталарĕ! Мĕншĕн? Кун пек пулса тухасса ĕмĕрте те шутлама пултарайман çав!.. Аçта кайса чикес ĕнтĕ пуçăма? Пĕтрĕ çамрăк ĕмĕр...»—Аннан çине-çине çутă куççулĕ юхса анчĕ. Ачаллă хĕрарăм асăрхасран шикленсе, вăл халь пĕрре те ун еннелле çаврăнса пахмаре, ахалех лайăх юртакан лашана турткаласа пычĕ.

«Эпĕ нихăш енчен те айăплă мар... Ку хĕрарăм та айăплă мар... Кунта вăл ним пĕлмесĕр килсе кĕрет. Икĕ арăм эппин Кирушăн! Кам пĕлет, тен виççĕмĕшĕ те пур-и? Ахаль мар пĕркун Варвари патне çӳрени çинчен каларĕç... Акă халĕ иксĕмĕр те пырса кĕретпĕр-ха! Савăнтăр, ирсĕр!»—хăй ăшĕнче пĕрмай упăшкине ылханса пычĕ Анна.

Унăн Белорусси хĕрарăмĕпе те тек калаçас килмерĕ. Вĕсем ăçта тĕл пулнине, мĕн чухлĕ пурăннине, ачи хăçан çуралнине те пĕлесшĕн пулмарĕ. Çын калаçнине те илтес килмере. Сиксе анас та лав çинчен, чупас ăçталла та пулин, çырмасем урлă, вăрманалла... Анчах ун пек тумарĕ Анна, хăйне хăй хытарма тăрăшрĕ.

Кирушсен çурчĕ тĕлне çитсен, вăл лашине тăпах тăратрĕ.

— Çитрĕмĕр! Анма пултаратăр...

Анна тăрантас çинчен сиксе анчĕ те, ачаллă хĕрарăма хăех анма пулăшрĕ. Япалисене килхушши хапхи патнех çитерсе пачĕ.

— Темшĕн, хăратăп эпĕ,—терĕ ют хĕрарăм, Анна çине пăхса.

— Ан хăра, кĕр те кай! Эсĕ саккунлă упăшку патне килнĕ вĕт!..

Хăй вара çавăнтах тăрантас çине сиксе ларчĕ те, лашине перрех туртса çапса, колхоз вити еннелле сиккипех чуптарчĕ.

*

Каҫ пуласпа, ҫумӑр айӗнче лачкам шыв пулса, Анна тӑван килне ҫитрӗ. Вӑл йӗпе тумтирӗсене улӑштарса тӑхӑнчӗ те пуҫ ҫинченех витӗнсе ашшӗ вырӑнӗ ҫине выртрӗ. Нумайччен куҫ хупса выртрӗ вӑл. Чӗри унӑн ҫаплах-ха сиксе тухас пек тапрӗ, пуҫӗнче тем тӗрлӗ шухӑшсем пӑтранчӗҫ. Вӗри те тӑварлӑ куҫҫулӗ минтер питне те йӗп-йӗпе турӗ...

Тӗттӗм пулсан ашшӗ пырса кӗчӗ. Хӗрӗ качча кайнӑран вара вӑл питех те кичем пурӑннӑ. Пушанса юлнӑ килӗнче унӑн пӗр минут та тӑрас килмен. Ҫавӑнпа вӑл садри хурал пӳртне пурӑнмаллипех куҫнӑччӗ. Килне те сайра хутра ҫеҫ, ҫимелли илме кӗркелесе тухнӑ.

Хӗрӗ киле килнине вӑл килхушшине кӗрсенех пӗлчӗ: весен пӳрт ҫӑри тӗлне урӑх никам та пӗлмен. Анчах тулли кӑмӑлпа кӗнӗ старик вырӑн ҫинче выртакан хӗрне курсан хӑрасах кайрӗ.

— Мӗн пулчӗ тата, ачам?—ун умне пырса тӑчӗ вӑл.

Анна ашшӗне хирӗҫ нимӗн те чӗнеймерӗ, чунӗ кӳтсе ҫитнӗрен пӗчӗк ача пек макӑрса ячӗ кӑна.

— Турӑҫӑм!.. Мӗн пулчӗ, мӗн? Кала-ха!..

Хайӗн ачи чӗререн татӑлса йӗни ашшӗ чунне ыраттаратех ҫав, старикӗн ватӑ куҫӗсем шывланса ҫуталчӗҫ.

— Хӑваласа ячӗҫ-им?—ыйтрӗ вӑл.

— Хам пӑрахса килтӗм.

— Мӗншӗн? Эп нимӗн те пӗлместӗп, лайӑхрах шухӑшласа пӑх-ха, тӗрӗс турӑн-и?

Анна кӑштах лӑпланчӗ те паян мӗн пулса иртни ҫинчен ашшӗне пӗтӗмпех каласа пачӗ.

— Ҫын картинчен тухнӑскер эппин вӑл,—хаштах сывласа ячӗ ашшӗ.—Апла пулсан уншӑн кулянма та кирлӗ мар. Сур та хур ун ҫине! Халь ӗлӗкхи мар...

Ҫав вӑхӑтра вӗсем патне темле ҫын мӗлки васкамасӑр пырса кӗчӗ. Вӑл урам хапхине те, пӳрт алӑкне те, асӑрханса, пӗр сасӑсӑр уҫса хупрӗ.

— Ыр каҫ сунатӑп,—терӗ Кируш, алӑк патӗнчех чарӑнса тӑрса. Унтан вӑл, унӑн-кунӑн пӑхкаласа илчӗ те, хайне

хирĕç хăшĕ те пулин сăмах каласса кĕтмесĕрех, Анна вырта-кан вырăн патнелле темиçе утăм ярса пусрĕ.

— Анна, мĕн пулчĕ сана? Чирлемерĕн пуле те?

Ана хирĕç Анна нимĕн те чĕнмерĕ. Çав тери кураймасăр пăхрĕ вăл хăйĕн упăшки çине, унăн пырĕ патнелле темĕн капланса хăпарчĕ...

— Анна, эсĕ мана çиленнĕ пулмалла... Анчах çиленме кирлĕ мар, манăн айăп çук сан умăнта!

Анна каллех чĕнмерĕ...

— Лăплан, Анна! Эсĕ ăнланмасăр хăтланатăн. Лешне эпĕ тӳрех хăваласа ятăм. Мĕн тума лартса килтĕн эсĕ ăна? Унпа эпĕ хут уйăрман вĕт. Манăн саккунлă арăм—эсĕ!

— Саккунсăррисем миçе тата?—мăшкăлларах ыйтрĕ Анна.

— Мĕн эсĕ çапла калаçатăн? Ку таранччен эпĕ сана пĕр сивĕ сăмах та каламан, калас та çук...—Кируш сасси ытла йăвашланчĕ. — Пăрах кирлĕ мара хăтланма. Калатăп-çке сана, эпĕ лешне хăваласа ятăм. Атя, тумлан, киле кайă-пăр...—Кируш Аннана аллинчен тытма пикенчĕ.

— Ан çулăх ман сумма!—сиксе тăчĕ Анна.—Икĕпитлĕ çын эсĕ, ирсĕр ултавçă!—Çавăнтах вăл утиялне хăвăрт кăна сирсе пăрахрĕ те урайне анса тăчĕ.—Тухса кай кунтан! Ха-лех тасал! Арăмупа ачу патне кай!

— Чим-ха, эсĕ, тăхта...—терĕ Кируш. Унтан Анна ашшĕ еннелле çаврăнчĕ те тархасланçи пулса ыйтрĕ:

— Атте, ăса кĕрт ĕнтĕ ăна!

Ашшĕ, ним тума аптраса çитнĕскер, сак çинчен тăчĕ те ун патнелле ик-виçĕ утăм ярса пусрĕ.

— Эсĕ ху ăса кĕр, ывăлăм! Кунта ухмаха ернисем çук[4]. Кай тухса! Илтрĕн-и? Тек сан уру ан пултăр ман килте!..

Кируш алăк патнелле чакса пычĕ...

# $

Анна çĕрĕпех çывăраймарĕ. Ытла йывăр пулчĕ ăна, ун пуçенче çĕр тĕслĕ аса-илӳ, тем тĕрлĕ шухăш... Тул çутăласпа тин телĕрсе кайрĕ вăл. Вăраннă чух стена çинчи сехет йĕппи

саккăр патнех çитнĕччĕ—Анна нихçан та çав вăхăтчен çывăрман. Вăл йăпăр-япăр тăрса питне çурĕ, арпашнă çӳç-пуçне туракаласа йĕркелерĕ. Ашшĕ тухса кайнă-мĕн.

Хăй кăштах лăпланнăскер, леш, Белорусси майрине асне илчĕ. «Эп ăна хăваласа кăларса ятăм», терĕ Кируш. Эппин, мĕн тăвать-ши вăл мĕскĕн хĕрарăм? Ана манран та йывăртарах вĕт-ха, вăл таçти инçетри çĕршывран килнĕ, çитменнине тата унăн алăри ачи пур. Шел... Мана вăл нимĕн те туман, ман пекех ирсĕр Кирушăн мăшкăлĕ пулса тăнă...

Анна тумланчĕ те, пӳртне питĕрсе хăварса, тӳрех Кирушсен ялне тухса утрĕ. Унăн халĕ çав ют майрана курас, ăна йăпатса лăплантарасси килчĕ...

«Тухса кайман пуль-ха... Аçта кайтăр ĕнтĕ вăл ытла тарукаx?..»

Чăн та, вăл çав ялтах пулнă-мĕн, Анна ăна уй хĕрринче пурăнакан пĕр карчăкпа старик патĕнче тупрĕ. Анна пӳрте кĕрсенех, хĕрарăм алăри ачине хăй çумне пăчăртаса чӳрече еннелле çаврăнса тăчĕ. Унăн куçĕсем макăрнипе шыçса хĕрелнĕ.

Анна кил хуçинчен вăрттăн калаçма шухăшламарĕ.

«Илтчĕрех, пĕлччĕр, пурне те каласа паччăр хăйсен ялĕнче мĕнле путсĕр çын пурри çинчен...»

— Итле, юлташăм, эпĕ сан умăнта айăплă мар,—терĕ Анна, хĕрарăм умне пырса тăрса,—Пирĕн иксĕмĕрĕн те пĕр пек хурлăх...

Халĕ ĕнтĕ вăл унпа «эсер» тесе калаçмарĕ.

— Пĕлетĕп. Эпĕ те сан умăнта айăплă мар. Çакă пулман пулсан эпĕ... халех тухса кайăттăм...—терĕ хĕрарăм, ачи çине кăтартса.—Тинех... Мĕн тăвас-ха...

Вăл каласа пĕтерейменсĕрех нăшăклатса йĕрсе ячĕ.

Аннан та куçĕсем шывланчĕç, анчах ку хăйшĕн мар, ют хĕрарăмăн ачине хĕрхеннипе пулчĕ.

— Паян вăл ман пата килчĕ те, эп ăна хăваласа кăларса ятăм,—терĕ хĕрарăм.

— Тĕрĕс тунă! Эпĕ те хăваласа ятăм.

— Мана ним те шел мар, ачам çеç чирлесе кайре,—тэтах хурланса макăрса ячĕ хĕрарăм.

— Эс... мĕн ятлă? Мана Анна теççĕ.

— Вера.

Анна унпа юнашар ларче.

— Вера, атя пирĕн пата, эп çуралса ӳснĕ киле. Инçе мар вăл, кунтан виçĕ çухрăмра çеç. Эпир аттепе кăна пурăнатпăр. Вăл та килте тăмасть, колхозри садра пурăнать. Пирĕн килте хăвна та, ачуна та япăх пулмĕ. Ачуна та сывататпăр, лирĕн унта медпункт пур. Темшен мар, ырă сунса чĕнетĕп сана... Атя! Кайран мĕн тăвасси курăнĕ унта...

Вера хирĕçсе тăмарĕ.

— Епле лайăх çын эсĕ...—терĕ те, унăн каллех куççулĕ шăпăртатса анчĕ.

Аннасем патĕнче вăл пĕр уйăха яхăн пурăнчĕ. Ачи сывалса вăй илсен тин ăна тухтăр çул çине тухма юрани çинчен каларĕ.

' Çав пĕр уйăх хушшинче Варăпа Анна, çывăх тăвансем пек туслашса, пĕр-пĕрне лайăх пĕлекенсем пулса çитрĕç. Вера ашшĕне фашистсем персе пăрахнă, амăшĕ чирлĕ пулнă. Çавăнпа та Вера çамрăклах хăй ĕçлесе тăранса пурăннă. Юлашки икĕ çул хушшинче вал хăйсен хулинчи пĕр магазинра ĕçленĕ. Кириллпа вĕсем çарта пурăннă чухнех паллашнă. Çарти служба сроке тухсан Кирилл тӳрех Верăсем патне пурăнма куçнă. (Анчах Аннана çав вăхăтра: çулталăка «сверхсрочно» юлатăп, тесе çырса янă, намăссăр!..) Верăн ача çуралнă... Ун хыççăн ик-виç уйăхранах Кируш киле каясси çинчен калаçа пуçланă. Верăна куншăн кулянма хушман. Кĕркунне каялла пырса вĕсене Кирилл хăйсем патне илсе килме пулнă. Вера хирĕçмен, ĕненнĕ. Анчах Кирилл хăй çырусем çырма пăрахнă пирки, тата çанталăк ытлашши сивве кайиччен тесе, упăшки патне Вера хăех килме шут тытнă... Çакăн пек тискерле пулассине вăл нихçан та кĕтмен... Çапах та халĕ Вера текех кулянмасть ĕнтĕ. Вăл çамрăклах хăй тĕллĕн пурăнма вĕреннĕ, çавăнпа малашне те лайăхах пурăнасса шанать.

Вера Аннасем патĕнче пурăннă чух вĕсем патне пĕр вĕçĕмсĕр ялти хĕрсем çӳререç. Хĕрсемпе вăл питĕ килĕштерчĕ.

— Çакнашкал лайăх çынсем хушшинче Кирилл пек икĕпитлĕ çынсем пулма пултарнине ĕненес те килмест...—терĕ вăл темиçе хут та.

Вера хăйсен çĕршывне тухса кайнă кун та хĕрсем Аннасем патне пухăнчĕç. Вĕсем ăна уй хапхине çитиччenех ăсатрĕç.

— Чипер çитмелле пултăр! Асту, ачуна ан шăнт...

— Ан ман пире! Çыр!..

— Унти хĕрсене пирĕнтен салам кала!..

Хыçлă çуна куçран çухаличченех аллисемпе сулса тăчĕç хĕрсем.

*

Çулла... Кунсем çав тери уяр та шăрăх... Вĕри хĕвелпе садри çырласем пиçеççĕ, улмасем тутлăланаççĕ. Хĕветут мучи çурăм хыçне пăшал çакать те сад тăрăх утать. Куç хупмасăр сыхлать вăл халăх пурлăхне çăткăн кайăксенчен.

Çиппе çапнă пек тӳрĕ йăрансем çинчен хĕрсем юрла-юрла çырла татаççĕ. Кашни кун колхоз хулана ик-виçшер машина çырла ăсатать: виктори, ир пулакан чие, унтан хăмла çырли. Мĕн чухлĕ тупăш!

...Анна сад варрипе утать. Лутра улмуççи тĕлĕнче Илья Васильевич тем ĕçленине курсан тăпах чарăнса тăчĕ... Каллех темĕнле опытсем тăвать пулас вăл. Улмуççи турачĕсене пĕрерĕн тыта-тыта пăхать, хăшпĕрисем çине темскер сĕрет.

— Э-э, Анна-çке!—терĕ Илья Васильевич, ăна асăрхасан.—Аçтан килме пĕлтĕн? Сана курманни нумай пулать.

Унăн куçĕсем йăл кулчĕç.

— Тархасшăн, йăпăртлăха тыт-ха çак турата,— терĕ вăл, улмуççин çӳлти туратне авса,—тепĕр ал пулнă пулсан чăрмантармăттăм та...

— Халĕ те темиçе алăшăнах ĕçлетĕн эсĕ,—терĕ Анна.

— Çук çав, тумалли ĕçсене ниепле те туса çитерейместы-

тĕп. Пĕччен пурнăç—пурнăç мар вĕт вăл, анчах мĕн тăвас тетĕн, чăтас пулать...

— Мĕншĕн мăшăрлă мар вара эсĕ, Илья Васильевич?—кĕтмен çĕртен хăйса ыйтрĕ те Анна, хăй хĕрелсех кайрĕ.

— Ун пирки мĕн калаçмалли... Тĕрĕссипе каласан, мана арăм çеç мар, ачасем валли амăшĕ те кирлĕ. Ун пеккине епле часах тупăн? Камăн пăхас килтĕр ют ачасене? Телейсĕр пултăм çав...

Сăмах пуçланă май, Илья Васильевичăн татах та калаçасси килчĕ. Паллах, унăн халь чăн малтан хăйĕн ачисем çинчен калаçмалла. Анчах ачасен амăшĕ пулаканни унăн çывăх юлташĕ те, тусĕ те, арăмĕ те пулмалла ĕнтĕ... Çаксем çинчен каласшăн вăл Аннана, çапах весен темшĕн-Çке сăмах çыхăнсах пымарĕ.

Анна тек нимĕн те каламарĕ. Вăл шухăша кайнă пек пулчĕ, унăн сăнĕ салхуланчĕ. Тĕрĕссипе, унăн-çак самантра Илья Васильевичăн пуçне хăй çумне тайăнтарса ачашлас килчĕ.—Хăй ăна юратнине ăнланчĕ вăл. Чĕри хыттăн-хыттăн тапма пуçланине туйса, вăл сад варринелле, хĕрсен юрри илтĕннĕ çĕрелле, кайрĕ.

Илья Васильевич пĕччененех тăрса юлчĕ.

Паян хĕрсем пиçнĕ çырласене татса хулана ăсатса пĕтерсен тин килĕсене саланчĕç. Хĕвел каç енне сулăннăччĕ ĕнтĕ, тулта çапах та питĕ ăшăччĕ-ха.

Анна хĕрсенчен уйăрлса тăкăрлăкалла кĕрсенех, хăйсен урам хапхи умĕнче кӳлнĕ лаша тăнине курчĕ те тĕлĕнсе кайрĕ.

— Анна, сана кĕтетĕп эпĕ,—терĕ Кируш, ăна хирĕç кетмен çĕртен хапхаран тухса.

— Мĕне пĕлтерет ку?—сывлăшĕ пӳлĕннĕ пирки аран тухакан сасăпа ыйтрĕ Анна.

— Сана илсе кайма килтĕм, Анна...—терĕ Кируш, аллинчи пушăпа выляса.—Çитет кун чухлĕ яла култарнипе, Атя, тумлан, каятпăр. Манăн паян çуралнă кун, пирĕн пата ханасем пухăнаççĕ. Эс пулмасан лайăх мар пулать... Эпĕ сан пирки пурне те: вăл вăхăтлăха ашшĕне пулăшса пурăнма

кайрĕ, тенĕ. Тата мана сельпо председателе тăвас сасă пур. Районти работниксем уменче хам йĕркеллĕ çын пулнине кăтартас килет. Эсĕ те председатель арăмĕ пулатăн... Ĕнтĕ текех кутăнланса ан пурăн! Атя, хăвăртрах хатĕрлен... Çилтăвăл пек, çĕр çĕмĕрсе илсе кайăп сана!

Унран эрех шăрши кĕнине туйсанах, Анна каялла чакрĕ.

«Неушлĕ эпĕ çак этеме юратнă?»—йĕрĕнсе шухăшларĕ вăл.

•— Эпĕ шӳт тума килмен кунта, ну?—терĕ Кируш, Анна çывăхнерех утса.—Ахалех кураймастăн эсĕ мана. Сан умăнта ман çылăхăм пысăках мар... Пулнă—иртнĕ. Халĕ эп ун пек мар вĕт. Тӳрленнĕ...—Вăл Аннана ыталама тăчĕ, анчах Аннашăн ку хăйне çĕлен сăхма тăнă пекех пулчĕ. Вăл тарăннăн сывласа илчĕ те шăл витĕр, хуллен, анчах çирĕппĕн каласа хучĕ:

— Çитĕ... Тасал хăвăртрах пирĕн тĕлтен, Макаров... юлташ!

— Анна, ман çуралнă куна та пулин хисепле!—йăлăнчĕ Кируш.

—- Сан çуралнă кунна та кураймастăп эпĕ. Ху çуралнă кунна мар, ывăлу çуралнă куна ытларах астăвас пулать!

— Анна, сансăр каймастăп эпĕ кунтан.

—• Эсĕ каймастăн пулсан, хам каятăп эппин,—терĕ те Анна, вăрт пăрăнса, урам тăрăх васкасах чупса анса кайрĕ.

Кируш ун хыççăн пĕр-ик утăм ярса пусрĕ те, хăваланинчен усси пулас çуккине курса, хытăн кăшкăрчĕ:

— Чипер тесе ытлашши ан мухтан! Ман таврашра санран чиперрисем те нумай!..

Унтан тăрантас çине сиксе ларчĕ, пĕр айăпсăр лашана пушăпа туртса илчĕ. Лаши çĕмĕрен пек тапса сикрĕ.

* * *

Анна колхоз садне çитичченех чупма чарăнмарĕ. Кунта вара кăштах сывлăш çавăрса илчĕ те, сад варринелле хытăн утса кайрĕ.

Илья Васильевич халĕ те килне кайман иккен-ха. Ана

курсан Анна чарӑнса тӑчӗ. Вал унпа калаҫиччен кӑштах лӑпланасшӑнччӗ, анчах ниепле те лӑпланаймарӗ. Ёнтӗ, ку таранччен пытарса пурӑннӑ туйӑмсем ҫинчен калатех вӑл ӑна... Ҫапах та, мӗнле хӑйса, мӗнле калас?..

Илья Васильевич ӑна ӑнсӑртран асӑрхарӗ. Анна хӑй ҫине аякран темле савӑнӑҫлӑн пӑхса тӑнинчен тӗлӗнчӗ вӑл.

— Анна!—терӗ Илья Васильевич, ӑна хирӗҫ утса.—Мӗн пулнӑ сана? Эсӗ сӑнран кайнӑ, шап-шурӑ...

— Илья Васильевич...—терӗ Анна хуллен, ун ҫине пӑхма *я&* хӑймасӑр.—Эпӗ... санӑн ачусен амӑшӗ пуласшӑн.

Илья Васильевич картах сиксе илчӗ. Унтан, пӗр сӑмах та чӗнмесӗр, Аннана ачашшӑн ыталарӗ.

Вӗсем ҫине ешӗл улмуҫҫи турачӗсем витӗр каҫхи хӗвел пайӑрки йӑлтӑртатса ӳкрӗ. Садра вӗҫен кайӑксен сасси хаваслӑн янӑраса тӑчӗ.

1956.